КС(Чув)
К27
Ч-36640

Марина Карягина

# ЫТ-И – ТĔКЕЛ-И?

Национальная библиотека ЧР
4-036640

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КС (чув)
К 27

Марина Карягина

# ЫТ-И --ТЁКЕЛ-И?

Чебоксары 1999 г.

К84.09(2Рос=Чув)6-52

84С(чув)
К-21

Марина Карягина
ЫТ-И -- ТЁКЕЛ-И?-Чебоксары/
Издательство "Руссика",1999. 44стр.

Ч-36640
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Издательство "Руссика"

Проверено 8 ДЕК 2017

Марина, пирӗн вӑй -- пӗчченлӗхре.

САНДР ПИКЛ ӳнерҫӗ
ӳкерчӗкӗ хыҫне
ҫырса панинчен.

кĕре кĕрӳçĕн — (йӳçĕ!) —
çур çын пек çӳрĕп çĕрĕпе
çĕрте — тĕнчен чĕтренчĕк ĕмĕлки
кил! — кил вырăнне пĕрле манатпăр

пăр çийĕ тĕнчелениччен

тĕнче çине пусса утатăп
(пăта çине!)
чĕн — пур мĕлкепе пулмин татулăх! —
çĕнем хĕнне

хĕрлĕрен те хĕрлĕрех пилеш пур
кăçалхи урамăн...
куçăма хупас пуль те вилес пуль:
эсĕ — манăн

Мар...

кам чĕнет ятран?.. юр вĕлтĕр-вĕлтĕр...
юр...ă, юр...а... ту-
та! —
кам шухăшласа кăларнă ĕнтĕ
çак вута...

куç çутисем пĕр ĕмĕрте çуннишĕн —
йăлт!
хăт —
акку:
куçа-куçăн иксĕмĕрĕн хӳшĕ

тăван (:юнпа, чунпа, унпа-кунпа) —
куç çутисем пĕр вăхăтра çуннишĕн!
ман çине усал пăхан Курни-çĕм,
эс — манпа

Эп тĕнчере Пурри:
ман чакăр куç хури,
ман шурнă аллăмсем,
ман кăкăр ум кĕсьем —

тетĕн-и?

Эс сассăр «çук!» тени —
куç хури хура марри,
куç хӳри хĕрӳ марри
(куç варри!)

пулĕччĕ

калаттарччĕ, пӳлĕхçĕм!

кăшт манăçчĕ:

кĕр аллинче —
мĕн анăш
анăç!
(кашта çинчи
шăналăкăн
ылмашăнин
шăна-шăна...)

улмашăн-им
улмалăхĕ —
шăн панулми пек
пĕлĕт
(кĕрпек
улма пек...)

кĕр пек:

куç кĕршĕн
тĕкĕр пек:

кĕр
тĕкĕре
кĕресшĕн пек
йĕрет...

турă пек кулатăн, терĕ...
(турă куллине курма
кăмăл хамăн та пур ман...):
турă пек калатăн, терĕм...

эп хам пĕлнĕ пек кăна:
Сана —

вёçсе пыни пек — лайăх
пăлханчăк сас-и: пăр айĕн-
(че —
тĕнче)

тӳссе курас пур айăп —
малашне!
çанă ăшне
кайăк
килсе ларин —
ан ил
ална

пăхам
куç айĕн-
(че
тĕнче!..)

...юр
ирĕлтĕрин
юл-ашки юрла...
(иксĕмĕртен пĕрин
юл-малла)

çур-малла
пурăнап
(пыр кăна —
курăн)
курăк та
урăх —
хăруш! —
(ан-н-н...)

кунта:
панулми
тулли
кулă

юл-...

кайтăрин,
кайтăрин...

кайăк-кай... — тăри!

уй тăррин-
е
шыратăр...

кайтăрин...

(ут
тутинчи
утă
хўрин
тăтăр-и
тăри...)

...ту тăрринчен
пăрахнă
тутăрăн...

кайтăрин...

каç
хуралăхра
хăра-хăра
тапаçланать
таç-
та...

тата...

çĕр хут
улмаланнă
улмалăх
улма-
сăрланать
çĕр хута...

тата...

тута —
            тăп:
путатăп...

аҫа та ҫиҫӗм
ҫиҫтӗр!
ҫаптӑр!

ҫӳҫ
тӑршшине
виҫет пек
ҫил

(ҫӳҫентерин
куҫ харшине
тахшин
ӑшшин!)

аҫа та ҫиҫӗм —
лайӑх!

ҫӳҫӗм
тӑршши —
мӑялӑх...

çуттăн тата тĕттĕмĕн
иккĕшĕн пĕр вăрттăнлăх
: (ĕмĕлкесем...)

кил эс, çил

тĕтĕме иленнĕ куç ман,
тĕттĕме иленнĕ куç
уçи-уçми вĕçмен —
уçнă!

уç!
йӳçĕ-и?

ĕç-ĕмĕр те —
куçăмăра
уçса
илесси

кил эс, çил

ут
куҫĕ хупăнчĕ —
(ту
тупрĕ уйăх) —

й-йăлт! сӳнчĕ
ҫут-
    ă-
        раснан:

асна —
сăна —
ют
путăксем
путаҫҫĕ
куҫланса:

тум-тирӳнте
упран
куҫсен
шутне...

ёшне...
йăва çи-
не
йăва...

пĕр ывăç çил —
((уçса курмалăх!))

йăвă-йăвă —
хыр йывăççи —

çурталăх!

ёшеннĕ
куç шăрçи —
çур талăк
йывăр-
ăшне...

:тĕкĕлтура
тĕкĕр
çинче
ларать —

ыт-и,
тĕкел-и —
текелет-им
турă?

Ч-36640
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

шăм-шакăм
пăртан-тăр:
вĕри!

кантăр
вăрри
çинĕ евĕр —
кантăк
çĕмĕрĕлни

мĕнне
пĕлме —
ирĕк мар,
кĕр кирлĕччĕ
пире
ерипен:
мĕн чухлĕ
нĕр илекен
пилеш!

кил леш
тĕле,
пĕлĕш
(ăшра:
«мăшăр
лĕпĕш
эпир»)

кил
тилĕ
йĕррипе —
ӳпне
ӳкнĕ
ӳсентăран
таран...

çуран,
çарран...

...çĕмĕрт
çырли
çинĕ евĕр —
кантăк
çĕмĕр-
ĕлни...

Ма килтĕн...
Кĕрĕм, мĕншĕн килтĕн...
Ан куран. Витĕр пăхса ил те —
илтĕн!

Кашни-пĕр
сыпкăм сывлăш — ассăн...
Каç — никĕт!*
(каç — а!-сапсăр—сассăр) —
сансăр.

Кашни-пĕр
хăрпăк — шăрпăк! —
Пăт!
(Каç (питĕ)... —)
Çитĕ...
йăр-р!-аланса
анать:
пат...
пат...

* никĕт — шăл чирĕ

пĕр çын та çук!
çынсем кăна...

çиççе илнĕ çиçĕм туйнине
çĕрелле пăхса усрап
ХĔЛ çитсессĕн уйрăмах тăсмак
мĕлкеленнĕ чĕрĕ-пĕрене-
ЛĔХ...

(пуласси — йăлт темĕн вăрринче):

пуласси — йăлт темĕн варринче:
хĕл варрин те пур-тăр тем!
эп — таçта пуçтараннă этем —
çын курма çӳретĕп çын çинче...

каланайманни пуçтараннă
тутам çине
(куçран пăхса ил-ха — таран-и? —
çине-çине!)

эсех-и ку — пурнăç-кукăрăм,
е ним те çук...
...те кайăк вĕçет сĕм суккăррăн,
те сумсăр çул-
çă...

а-а!
шăп...
ашăкланă
алăк
кăна

хăнам,
анăç —
канăç
пекки —
шăннă
кантăк
леш айккинче,

тени те —
ӳтĕм
чĕнни, тен?

эпĕр
чĕнни —
чĕлтĕрт! —
тепĕр
енне!

...талт!
татăлать...

самант
юлать

(амант-
ман-иç!):

манăç,
ман,
ман,

сав
мана —
савăн!

чунра
пĕр чун çунни,
пĕр чун сăнни
мĕскер суйи сăнра,
мĕскер чăнни
ку-и?

...кĕскен чĕнни...

тĕлли-
паллисĕр талăкăн тĕнни
пулни (пулин суллисĕр!),
савнин — çĕннин — çанни,
...кулли сĕр-
тĕнни

тени-
теейменни...

çуратас умĕн

вă- (хăт)-
рах
МАР-И?-НА-чар!
Ы!-ВĂ-хăт-сăр-Лăх-чĕ...

чан:
тан-н! тан-н!
тан-лаш-таран:
  тан! — таран!
 :ман
  ачан
  ачин ачин ачи —
  сан!

юн пулса çӳреп-им
ăруран-ăрăва...
йăваран— йывăра,
тетĕп

— тар!
— тăр!

ар, ан чар:
чаруран — çаруран
çаруран — çарăра
ар — арăм
арăм — ар
тарама!

ăруран-ăрăва...
йăваран — йывăра,
тетĕп:

йăмăхуран —
йăлăхăва?

(йăлăхуран:
йăлă... —
хуран... —
т. ыт. те...

(«тыт!» те:
ӳкеп:
тута —
тутаран!))

ăруран-ăрăва
йывăртан-йывăра

тĕлĕк-кĕлĕ

1. юн-сен кӳлли
   чун-сен кĕлли
   кĕл!
   кĕл!
   килекен те —
   кĕлмĕç,
   килĕç-килмĕç:
   килсене — кĕле

2. хĕр'-эс-сем...

3. хĕрхенсем,
   туррăмçăм!
   хĕрсем —
   хĕсĕр,
   арăмсем —
   хĕне...

чикки — йӗ-
лӗ пек кил-
        -н-
ӗ-мӗт екки!
иккен — ӗлӗк...

тахçанхи аса илӳ пек
лӳчӗркенчӗк те кӗрпек
кун

карланка ларать те мӑкӑль:
кӑмӑл — мӑкӑнь — тӑкӑн......
 — кул!

(мӑйӑр курланки пек — мӑкӑльт! —
курӑнса илинччӗ кӑльт
ху!..)

вăл — чи-чи мар

(йывăç чунĕ те тарăнччĕ —
пăр витĕр —
чĕр тымар):

вăл — пытарăнчăк
чунлă

вăл — чăмăрта
хĕл каçнă çумăр,
ывăçа пуçтарăннă
кăвар

кулас куллăн килнĕччĕ,
пайăн-пайăн — кайăн...

(кайăк,
кайăкăм!)

ишме пĕлмен кайăк пур,
айăн-çийĕн пурнăçĕ —
çĕрсĕр тинĕс урлăшĕ .

кама — кампа...
(кӑмпа
витӗннӗ
ҫул-
ҫӑпа...)
мана —
чӑл-пар
саланнӑ
кӑмӑл:

хӑмӑл —
пучах
сассишӗн:

чутах
пуҫланатчӗ
ҫу —
ҫумӑр
мӑраннӑн
ҫурӗ

тулли
йĕкел
пек
куç-
(çул’-сем...) —

тухса
ӳксе —
туйра
шăтас
пек —

çилсем
туйса
курас
тăрришĕн:

ун-чченхине... — (хĕсместĕп
тăват енне) —
хĕне — ас астумасть кăна

хыҫ-ҫăнхине... — кĕслеҫ те
тĕс сассипе калать...

пĕр тан
пăртак

кĕҫ леш те —
каҫ-тертĕм —
(ун-чченхиллех
иккен:
хыҫ-ҫăнхиллех —
ик ен-) -
лĕ —
(сас-тĕс-артак...
сас-артак-тĕс...)
сасартăк! — эс-
лĕ!
сасартăк! — эс-
(сĕр.. -
тĕнӳ) -
сĕр...

а...
ача...
ача йĕни пек...
ача йĕни пек туйăмлă...
ача йĕни пек туйăмлă уйсем...
ача йĕни пек туйăмлă...
ача йĕни пек...
ача...
а...

...

сывлăм пĕрчи пек
пăчăртанса выртап —
ыратап:

тĕнче сăнне илсе
хам витĕр кăтартап

сасă та мĕлкеллĕ ку енче

хăйĕн ах!-рăмне шеллет ту-
пан-
    улми кассан та юн тухать
туйăнса тăрать-ши чĕр-ене?
эп — кунта тек тӳсеймен енне —

(çак самант — чи юрăхлă самант:
аса ил-ха уйăх пек сăна!) —
уйрăлатăп: хуйăхăм чĕнет
хĕллерен — хĕвел çине

## ТУПМАЛЛИ

«кӗре кӗрӳҫӗн — (йӳҫӗ!)...»
«хӗрлӗрен те хӗрлӗрех пилеш пур...»
«куҫ ҫутисем пӗр ӗмӗрте ҫуннишӗн...»
«Эп тӗнчере Пурри:...»
«кăшт манăҫчӗ...»
«турă пек кулатăн, терӗ...»
«вӗҫсе пыни пек — лайăх...»
«юр ирӗлтӗрин юл-ашки юрла...»
«кайтăрин, кайтăрин...»
«каҫ...»
«аҫа та ҫиҫӗм...»
«ҫуттăн тата тӗттӗмӗн...»
«кил эс, ҫил...»
«ут куҫӗ хупăнчӗ...»
«ӗшне...»
«:тӗкӗлтура:...»
«шăм-шакăм пăртан-тăр...»
«Ма килтӗн...»
«пӗр ҫын·та ҫук...»
«ҫиҫсе илнӗ ҫиҫӗм туйнине...»
«каланайманни пуҫтараннă...»
«а-а! шăп...»
«...талт! татăлать...»
«чунра пӗр чун ҫунни...»

«çуратас умĕн»
«чан: тан-н! тан-н!»
«юн пулса çӳреп-им...»
«тĕлĕк-кĕлĕ»
«чикки — йĕ-лĕ пек...»
«тахçанхи аса илӳ пек...»
«вăл — чи-чи мар...»
«кулас куллăн килнĕччĕ...»
«кама — кампа...»
«тулли йĕкел пек...»
«ун-ччен хине...»
«а... ача... ача йĕни пек...»
«сасă та мĕлкеллĕ ку енче...»

Издательство "Руссика". Чебоксары, Московский проспект д.29/1. Лиц. ПЛД №27-50.

Тираж 100 экз.

Çак кĕнекене кăларас ĕçе хутшăннăшăн Эберт Наталия Константиновнăна пысăк тав. Ĕмĕр пархатар курмалла пултăр.

Марина.

30=00